Кил хуçи хěрарăмěсене пулăшма

# Кантăк умěнчи пахча

Килти условисенче, паллă ěнтě, симěс сухан çитěнтерме çăмăлрах. Таса шыв тултарнă савăт-сапа çине фанер е картон хупăлча хумалла, унта вара сухан пуçěсем вырнаçмалăх шăтăксем тумалла. Сухан çěрсе ан кайтăр тесен сухан пуçěсене шыв çине кăшт кăна перěнмелле вырнаçтармалла.

Сухана тăпра тултарнă ещěкре те çитěнтерме пулать. Шывне улăштарса тăмалла мар, тăприне вара кирек хăш чечек магазинěнче те туянма пулать. Сухан пуçěсене йěпе тăпрана вырнаçтараççě. Çулçăсем йěркелениччен ещěке ăшă выранта тытмалла. Кайран вара кантăк умне те вырнаçтарма юрать. Анчах манса ан кайăр, суханăн пěрремěш çулçисене татма кирлě мар, унсăрăн симěс сухан çитěнесси чарăнě.

Петрушкăпа сельдерей çитěнтересси апатра усă курмалли симěс пахча çимěç çитěнтермелли условисенчен тепěр мелě пулса тăрать. Тымар çимěçсене магазинра туянма пулать. Анчах та вěсене шултрараххисене суйласа илме тăрăшмалла: сельдерейăн вăл 5 сантиметртан, петрушкăн 2 сантиметртан кая пулмалла мар. Çулçă тухмалли хунавсем сывă пулнипе пулманнине те пăхма ан манăр.

Лартма тытăниччен çěре лайăх шăварăр. Тымар çимěçсене ретсемпе 6-8 сантиметрта вырнаçтармалла. Вěсене кăштах тайлăк вырнаçтарсан лайăхрах. Анчах та çŷлти пайě çěр сийěнчен курăнса тăмалла. Енчен те тымар çимěç сирěн ещěкшěн е куршакшăн ытлашши вăрăм пулсан, аялти пайне касса пăрахма пулать. Кашни сийне тăпрапа хуплăр. Анчах та çŷлти папаксене тăпрапа хуплама кирлě мар!

Куршаксемпе ещěксене 10 кунлăх усă вырăна лартăр. Сăмахран, картланă балкон çине. Нумай мар тата вăхăтран вăхăта кăна шăварса тăрăр. Тăпра кăна нŷрě пултăр. Çŷлти папка аталанма тытăнсан куршаксене кантăк умне е кантăк умěнчи сěтел çине вырнаçтарас пулать. Куршак е ещěк вырнаçтарнă çěрте температура 12-18 градус пулмалла. Халě вара ытларах шăварма тытăнмалла.

Сухана та, ытти тымар çимěçсене те ытлашши ан шăварăр. Тăпрана кăпкалатса тăрăр. Ун чухне çиелти çěр сийě хытса лармě, тымарсем те çěрсе каймěç. Енчен те эсир симěс çимěçсене касса илнě хыççăн ŷсен-тăрансене минераллă шěвек удобренисемпе апатлантарса тăратăр пулсан, сирěн кантăк умěнчи «йăран» уйăх çурă е икě уйăхлăх та пулě. Апатлантарма вара пŷлěмри ŷсен-тăрансене апатлантарма кăларакан удобренисемпе те усă курма пулать. Анчах та тымар çимěçсем валли туса хатěрлекен ятарлă удобренисемпе усă курсан лайăхрах. Кайран тымар çимěçсен тымарěсем вăйсăрланаççě, вěсем вырăнне çěнě тымар çимěçсем лартма май пур.

Тымар çимěçсем алă айěнче пулмасан мěн тумалла-ха? Ятарлă кирек хăш магазинра та петрушка, укроп, сельдерей, кресс-салат, базилик, кориандр, горчица вăррисене туянма, вěсене акса çитěнтерме пулать. Вăхăт ытларах кирлě пулать кăна. Мěншěн тесен вăрлăхăн ŷссе аталанмалла вěт-ха.

«Фиалка» евěрлě тăпрапа тултарнă ещěксемпе куршаксене малтан вěри шывпа шăвармалла, йěрсем тумалла та вăрăсене акмалла. Йěрсем хушши мěн чухлě пулмаллине пакет çине çырнă. Акнă хыççăн вăрăсене 1 сантиметр хулăнăш тăпрапа хуплăр. Салатăн пěчěк вăррисене пачах хупламалла мар.

Хунавсем маларах шăтса тухчăр тесен акнă культурăсене пěр кун урлă, анчах та кунне икě хут – ирхине тата каçхине – нумай мар шăвармалла. Хунавсем тухрěç пулсан уяр кунсенче кунсерен е пěр кун урлă, тěтреллě кунсенче сахалрах шăвармалла. Симěс ŷсен-тăран 10-12 сантиметр çитěнсен ăна касма юрать.

Ŷсен-тăрана кěркуннехи тата хěллехи вăхăтра çитěнтерме ещěксем çине 50 сантиметр çŷллěшне люминесцентнăй лапочкăсем вырнаçтармалла. Февраль-март уйăхěсенче акатăр пулсан лампочка çакма кирлех мар.

**А. МАТВЕЕВ,**
**пахчаçă.**

Кěскен

## Вырăнти влаç ыйтăвěсемпе

Январěн 24-мěшěнче Етěрнере Сěнтěрвăрри, Муркаш, Шупашкар тата Етěрне районěсенчи ял тăрăхěсен пуçлăхěсемпе специалисчěсен ялан ěçлекен зона семинарě иртнě. «Раççей Федерацийěнче вырăнти самоуправление йěркелесси çинчен» 131 № Федераллă Саккунăн требованийěсене пурнăçа кěртессипе Етěрне районěнчи вырăнти самоуправлени органěсем мěнле ěçлесе пыни çинчен Етěрне районěн пуçлăхě Е.М. Яранский каласа панă.

Ял тăрăхěсен муниципаллă пěрлешěвěсем çине нотариус ěçě-хěлěпе çыхăннă хушма патшалăх полномочийěсене хурасси пирки Чăваш Республикин юстици министрě В.П. Петров, республика нотариус палатин вице-президенчě Н.Г. Ротманова, Чăваш Республикин муниципаллă пěрлешěвěсен канашěн иккěмěш съездěнче палăртнă йышăнусене, предложенисене тата сěнŷсене пурнăçа кěртессипе туса ирттермелли ěçсем пирки Чăваш Республикинчи муниципаллă пěрлешŷсен канашěн исполнительнăй директорě В.И. Максимов тухса калаçнă.

Вырăнти самоуправлени ěçě-хěлěн ыйтăвěсемпе Етěрне районěн прокурорě В.В. Степанов, Чăваш Республикин çут çанталăк ресурсěсен тата экологи министрěн çумě В.И. Краснов, республика пушар службин пуçлăхě В.Ф. Игнатьев, республика пурлăх тата çěр хутшăнăвěсен министрěн çумě А.И. Дмитриев, Чăваш Республикин ветеринари службин пуçлăхě В.К. Тихонов, потребительсен прависене хŷтěлессипе тата çынсен тăнăçлăхě енěпе ěçлекен федераллă патшалăх службин Чăваш Республикинчи территори управленийěн ертŷçин ěçěсене туса пыраканě В.Н. Сергеева, ветеринарипе фитосанитари тěрěслевěн федераллă службин республикăри управленийěн ертŷçин çумě А.Б. Андреев, федераллă налук службин управленийěн пуçлăхěн çумě О.М. Никина тата ыттисем хăйсен шухăш-кăмăлне пěлтернě.

**Хамăр инф.**

Килти хушма хуçалăх

# Мěнпе юнашар акма юрать?

***Пěр йăран çинех тěрлě пахча çимěç акма кăмăллатăн. Хăшě хăшěнпе килěштерет-ши?***

| Культура | Пěр-пěринпе килěштереççě | Килěштермеççě |
|---|---|---|
| Хăяр | Пăрçа, купăста, шалча пăрçи, йŷç кăшман | Çěр улми |
| Томат | Сухан, шалча пăрçи, çумăр курăкě (спаржа), купăста евěрлě пахча çимěç | Кольраби, фенхель, вăрăм пулакан пахча çимěç |
| Баклажан | Сухан, шалча пăрçи, симěс культурăсем | – |
| Пуçлă сухан | Купăста евěрлě пахча çимěç, хěрлě кăшман, çěр çырли, томат, салат, чапăр курăкě, сивě курăк (цикорий) | Пăрçа, шалча пăрçи |
| Сухан-порей | Сельдерей, кишěр, сухан | – |
| Кишěр | Эмел шур курăкě (шалфей), салат, томат, пăрçа | – |
| Хěрлě кăшман | Шалча пăрçи, кольраби, салат, купăста евěрлě пахча çимěç | Шурă пăрăç (горчица), вăрăм туналлă шалча пăрçи |
| Шалча пăрçи | Кишěр, хěрлě кăшман, хăяр, чапăр, куккурус, çěр улми, çěр çырли, томат, пăрçа, баклажан, кавăн, дыня, арпус | Сухан, сухан-шалот, ыхра, фенхель |
| Ыхра | Томат | Пăрçа, шалча пăрçи |
| Йŷç кăшман | Хěрлě кăшман, шпинат, кишěр, ыраш кěпçи (пастернак), хăяр, кавăн, дыня,томат | Иссоп |
| Арпус | Çěр улми | – |
| Дыня | Куккурус | Çěр улми |
| Салат | Çěр çырли, хăяр кишěр, йŷç кăшман, купăста | – |
| Кресс-салат | Редис | – |
| Шпинат | Çěр çырли | – |
| Майоран | Кишěр | – |
| Фенхель | – | Пур пахча çимěç те тенě пекех |
| Çумăр курăкě (спаржа) | Петрушка, томат, базилик | – |
| Çěр улми | Шалча пăрçи, куккурус, купăста, хěрен, баклажан, сухан | Кавăн, томат, хăяр |
| Купăста:<br>шурă туналлă купăста<br>чечеклě купăста<br>кольраби<br>брокколи | <br>Сельдерей, укроп, сухан, салат, çěр улми<br>Сельдерей<br>Хăяр, сухан, хěрлě кăшман<br>Сельдерей, эмел шур курăкě, хěрлě кăшман, сухан, çěр улми | <br>Çěр çырли, томат, шалча пăрçи<br>Томат, çěр çырли<br>Томат, шалча пăрçи, çěр çырли<br>Шалча пăрçи, томат, çěр çырли |

Пирěн пата çыраççě

## Шкулпа тачă çыхăну тытатпăр

Шкул вăл – иккěмěш кил. Унта пирěн ачасем вăхăтăн ытларах пайне ирттереççě. Шкулта вěсем пěлŷ илеççě, тěрлě мероприятисене хутшăнаççě. Ачасене тарăн пěлŷ парас тесе тăрăшаççě те ěнтě Турайри вăтам шкулти вěрентекенсем. Ачасене вěренме шкулта пур условисем те пур. Таса та çутă классем, сывлăха çирěплетме – пысăк спортзал, пěлěве ŷстерме – библиотека, аваллăха аса илме, асра тытма – материалсемпе пуян музей. Шкулта компьютер класě те йěркеленě. Пирěн ачасем Интернет сетьне кěме те пултараççě. Уроксем вěçленнě хыççăн та ачасем киле килме васкамаççě, тěрлě кружоксене юлаççě. Вěрентекенсем тăрăшса ěçленипе ачасем районти конкурссенче, олимпиадăсенче малти вырăнсене çěнсе илеççě. Республика шайěнче те тăван шкулăн ятне ăнăçлă хŷтěлеççě.

Турай шкулě пирěнпе, ашшě-амăшěсемпе, тачă çыхăну тытать, чěрěк пěтěмлетěвěсем тăрăх ашшě-амăшěсен пухăвне ирттереççě. Унта эпир тěрлě ыйтусем сŷтсе яватпăр. Мероприятисем ирттернě чухне те пире яланах хапăл туса кěтсе илеççě.

Турайри вăтам шкулта вăй хуракансене эпир чěререн тав тăватпăр, ěçре пысăк çитěнŷсем сунатпăр.

**Ашшě-амăшěсен ячěпе**
**Т. ЯНИКОВА.**

Астăвăм

# Эпě килте ěнтě

1947 çулхи апрелěн 1-мěшě. Эпě хама çуратса çитěнтернě тăван килте. Епле савăнăç. Ун чухне çăкăр-тăварě те çителěклě пулман, апла пулин те пěрлешŷллě хуçалăх вăрçă хирěнчен чипер йěркеллě таврăннă шучěпе, йывăр пулин те, 50 килограмм пăрçа уйăрса пачě.

Ирěклě пурăнма майсем пур. Апла пулин те аттепе анне мана кун пек ирěклěн çŷреме май памарěç, авланма сěнчěç. Ялти юрату килти мар терěç. Хěрсем çук мар. Анчах та вěсене качча тухма ыйтсан чылайăшě сан аннŷ пек кăвак куçпа çŷрес килмест тесе хуравларě. Чăннипе вара манăн анне атте хăйěн аллине ирěке янипе тăтăшах кăвак куçпа çŷрени пулман мар.

Кŷршěри Герасим Осипович ман валли мăшăр тума хěр пăхма каясси пирки пěлтерчě. Çапла вара эрне кун ирхине хěр пăхма кайма çул тытрăмăр. Чăн та, хěрне курсан хăй килěшсен эпě тиркес темерěм. Хěр тупкăчи чěлхи-çăварне хěрхенмен курăнать, хěр мана качча тухма килěшрě. Çапла вара июнěн 3-мěшěнчен Хыркассинчи Петр Павлович хěрěпе арлă-арăмлă пурăнма пуçларăмăр.

Мăшăрăм куллен колхоз ěçěнче. 1948 çулхи мартăн 8-мěшěнче çемьере йыш та хушăнчě. Юнкă ялповěнче Юнкăпуçěнчи магазинра ěçлеме çын кирлě тенěрен унта ěçлеме килěшрěм. Ялпо председателěнче вăрçăра майор званийěпе пулнă çын ěçлетчě. «Ну, салтак, маххă ан пар»,– терě вăл мана ěçе илнě май.

Чиперех ěçлекелерěм. Ун чухне эрех таврашне кăмăллакансем сахал марччě. Эрехне те пичкепе кŷрсе килетчěç. Хăшěсем эрехне укçине кайран тŷлемелле илсе каякансем те пулман мар. Укçа пирки аса илтерсен: «Мы же свои люди, сочтемся», – тесе лăплантаратчěç. Ку вара питě вăрăма тăсăлчě. 1949 çулхи март вěçěнче ялпо пухăвě пулчě, унăн ертŷçи мана укçа тŷлемен тěслěхсем пирки каласа хытах намăслантарчě. Парса çитерейммен укçа 1442 тенкěпе танлашрě. 1949 çулхи апрелěн 27-мěшěнче пулса иртнě суд мана 5 çуллăха ирěкрен хăтармалла тесе йышăнчě.

Эпě коммунист пулнă пулин те, ниçта сŷтсе явмасăрах парти билечěпех арестант пулса тăтăм. Камерăна хупсан çумра парти билечě пулнине кăтартсан милиционер мана ăна пама ыйтрě. Эпě килěшмерěм. Кайран вара тепěр милиционерпа пырса партбилета вăйпах туртса илсе кайрěç.

Ун хыççăн майăн 1-мěшěнчи уяв хыççăн Шупашкар тěрмине вырнаçтарчěç, кайран Красноярск хули çывăхěнчи Злобино хулинчи куçарса каймалли пункта илсе кайрěç. Кунта 5 кун хушшинче 3 комисси пулчě. Эпě Енисей тăрăх çурçěре кайма юрăхлă пулаймарăм.

Комисси витěр тухса çурçěре кайма юрăхсăр тесе йышăннисене Красноярск хулинчи лагерьсене вырнаçтарчěç. Эпě те унта лекрěм. Мěншěн тесен эпě питě ырханланса кайнăччě. Мăшăрăм аллинче пěчěк ача, çитменнине 2-мěш ачапа вăл йывăр çын.

Лагере пырсан тŷрех тěрлě ěç ěçлекен рабочисен бригадине çырса хучěç. Бригадирě вара питě кăмăллă çынччě. Бригадăн çуртсем тума фундамент яма траншейăсем чавмаллаччě. Норма 5 кубла метрпа танлашатчě. 9 сехет хушшинче çакăн чухлě ěç пурнăçлама вăй-хал çитместчě. Бригадир вара мана хěрхеннěн туйăнатчě, эпě мěн ěçлени çумне тепěр çавăн чухлě хушса çырса паратчě. Çавăнпа эпě апатпа çăкăра та çителěклě илсе тăраттăмччě, уйăх вěçленсен укçа та паратчěç.

Паллах, эпě хама ырă тунине кура ăна укçа та сěнтěм. Вăл вара çапла каларě: «Хальлěхе хăв шутлă нормăна тултарма пултариччен çирěплен, кайран урăх юмах пулě». Кěр енне самаях ěçе хăнăхса пырса нормăна 120–130 процент пурнăçлама пуçларăм. Хама тивěçекен укçан çуррине ăна параттăм. Тепěр чухне ăна та илесшěн марччě.

Икě çул иртсен мана урăх лагере куçарчěç. Вăрман касассипе нумаях ěçлемерěмěр. Ирěкрен хăтарнин срокě икě çултан катăлнисене Широтекен станцирен инçех мар вырнаçнă «Коммунар» ылтăн кăларакан предприятие вырнаçтарчěç. Кунта вара условисем урăхларах терěç. Квартал хушшинче нимěнле айăп та тумасан тата ěç нормине ирттерсе пурнăçласан 1 кун 3 кун вырăнне шутланать терěç. Çапла вара 1952 çулхи сентябрьтен пуçласа 1953 çулхи март уйăхěшěн 1 çулталăк та 2 кун зачет пачěç.

Манăн ирěкрен хăтарни пěтěмпе те 12 кун кăна юлнăччě. И.В. Сталин вилсен амнистипе пире ирěке кăларчěç. 1953 çулхи апрелěн 15-мěшěнче алла паспорт илсе эпě ирěклě çын пулса тăтăм. Паспорт çине те судпа айăпланине каçарасси пирки çырса хунăччě.

Киле çитсен анне хěлěпех Сěнтěр больницинче чирлě выртни пирки пěлсен тŷрех унта çул тытрăм. Матвеев врач хăй патне чěнчě те çапла сěнŷ пачě: «Аннŷ питě йывăр чирлě. Вăл нумай пурăнаймасть. Кунтан виле илсе кайиччен кунтан чěррěн илсе кайсан лайăхрах пулě». Тепěр кунне лаша кŷлсе Сěнтěр больницине çула тухрăм. Аттепе анне ун чухне Ильинкăра пурăнатчěç. Аннене Ильинкăна е Юнкăпуçне илсе каясси пирки ыйтсан вăл кăмăлсăр пулчě. «Эп сана çуратса пăхса çитěнтермен-и, хăвăн патнах пырас шухăш пур»,– терě. Киле килсен 8 кун пурăнсан май уйăхěн 5-мěшěнче вилсе кайрě.

Киле таврăнсан тăвансемпе юлташсем хамран ютшăнманнине авана туйрăм. Унччен вара эпě ял-йыш, тăвансем мана çапла кăмăллăн кěтсе илессе, малашне колхозшăн, халăхшăн усăллă ěç тума шанма пултарасса кěтме пултарайман. Елкино ялěнче типлă ěне фермин çуртне тунă çěрте строительство бригадине ертсе пыма шанчěç. Чăннипех савăнтăм куншăн.

Шанса панă ěçе тŷрре кăларма тăрăшнăшăнах пулě пěр вырăнтан тепěр вырăна куçарса пычěç.1953 çултан тытăнса виçě суйлав тапхăрě хам тивěçлě канăва тухиччен хуçалăхри ревизии комиссийěн председателě пулнă. 5 çул хушши ěне тата сысна фермисенче вăй хутăм, 18 çул хушши уй-хир бригадин ěçченěсемпе пěрле ял хуçалăх культурисенчен пысăкрах тухăç илес тесе тăрăшрăмăр. Ěне тата сысна продукчěсене туса илесипе кăлтăксем пулман.

Çěр улмине вěçěмех 3 тěс уйăраттăмăр: патшалăха ăсатмалли шултрине, вăрлăх валли тата выльăхсем валли. Бригадăра çěр улми 35 гектар çинчеччě. Ăна копалкăсемсěрех, алăпах кăларса пухнă. Хуларан килекеннсем те хутшăнатчěç çак ěçе.

Çěр улмине сортлине ытларах пуçтарса пама тăрăшаттăмăр. Мěншěн тесен вăл вăхăтра çěр улмине Кубăна та ăсатнă пирки тěрěслев çирěпчě. Сортлă çěр улми хатěрлесе панăшăн 1 килограмм пуçне 16 пус тŷлетчěç, ахальлишěн вара – 6 пус. Пěр çулхине сортлă çěр улми хатěрлесе панăшăн бригадăна 2000 тенкě преми пачěç. Ку вара бригадăшăн питех те пысăк савăнăç пулчě.

**И. ВАСЮХИН,**
**вăрçăпа ěç ветеранě.**